
Yandex.ru сайтран.

# ЯЛТИ БИЗНЕС

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Елена Порфирьева.

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

## Çăматă йăвалаççĕ, шăхлич ăсталаççĕ


Мастер-класра.
С.Чикмякова сăнӳкерчĕкĕсем.

**Тĕлĕнмелле пултаруллă Раççейри ал ăстисем. Вĕсен тăрăшулăхне пула тĕрленĕ Раççей картти те кун çути курчĕ. Пирĕн ентешсем хушшинче те ăста ал маçтăрĕсем пурри савăнтарать. Маттурсенчен пĕри – Хапăсри Елена Есенцева.**



Елена Николаевна Вăрнарти ӳнер шкулĕн художество уйрăмĕнче тăрăшать. Çамрăк ăрăва тăван ен культурине сыхласа хăварма, асаттесемпе асаннесен ăс-хакăл пуянлăхне хаклама вĕрентет. Кружокри ачасене ал ĕçĕсем тума хăнăхтарать. Ӳнер шкулне çӳрекенсем ӳкереççĕ, çĕлеççĕ, тĕрĕсем эрешлеççĕ, капăрлăхсем тăваççĕ, тăмран тĕрлĕ фигурăсем ăсталаççĕ. Тата çăматă йăвалама та вĕренеççĕ. Паллах, ăна пуканесем, сувенир валли хатĕрлеççĕ пулин те ачасен пултарулăхĕ çултан-çул туптанса пырать. Тен, вĕсенчен хăшĕ те пулин ӳссе çитĕнсен халăх промыслисемпе ĕçлĕ, ял бизнесне аталантарĕ, хăй ăсталанă япаласене сутма пуçлĕ.

Палăртмалла, хальхи вăхăтра, акă, ялсенче çăматă йăвалакансем, шăхличĕ ăсталакансем çукпа пĕрех. Елена Николаевна калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тăвать. Ачасен чунĕсенче шкул саккинченех ырă вăрлăх аксан чăвашлăха упракансем пулаççех.

Ваттисем çапла калаççĕ: «Лаша пуласси тихаран, этем пуласси ачаран паллă».



Елена Есенцева чунĕнче илемлĕх тĕнчи пĕчĕкренех ырă туйăм вăратнă. Амăшĕ ăна пиччĕшĕпе пĕрле ачаранах ал ĕçне хăнăхтарнă, искусствăна юратма вĕрентнĕ. Елена Есенцева профессипе керамист, çавăнпа унăн мастерскойĕнче уйрăмах тăмран ăсталанă япаласем – шăхличсем, теттесем, пуканесем – чылай. Вăл йĕркеленĕ куравсене халăх япаланах йышлăн пухăнать.

Маçтăр нумаях пулмасть Санкт-Петербургра иртнĕ пĕтĕм чăвашсен Акатуйне хутшăннă. Аякри ентешсене хăйĕн пултарулăхĕпе паллаштарнă.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Ĕçре те, ăмăртура та правур

**Шупашкар районĕнчи «Чурачикское» акционерсен обществи çумĕнче техник-осеменаторсен республикăри конкурсĕ иртнĕ. Мероприятие уçма Чăваш ен ял хуçалăх министрĕн пĕрремĕш çумĕ Сергей Фролов, чĕрчунсен чирĕсемпе кĕрешекен хула станцийĕн пуçлăхĕн çумĕ Сергей Скворцов, «Агроинноваци» предприятин директорĕ Николай Васильев, «Чурачикское» обществăн генеральнăй директорĕ Евгений Шалеев хутшăннă.**



Чи лайăх техник-осеменатор ята тивĕçессишĕн 42 специалист тупăшнă. Конкурсра Алексей Фадеев фермер хуçалăхĕнчи Елена Фадеева тата Пăртас ветучастокĕн заведующийĕ Елена Языкова хăйсен ăсталăхне кăтартнă. Конкурсантсем виçĕ тапхăр витĕр тухнă.

– Елена Фадеевăпа Елена Языкова та професси тĕлĕшĕнчен маттур пулнине çирĕплетрĕç, Ял хуçалăх министерствин Тавне тата хаклă парнене тивĕçрĕç, – терĕ район администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн тĕп специалисчĕ Людмила Капитонова.

Елена Николаевна Фадеева Отиккăвăра пурăнать. Мăшăрĕпе Алексей Николаевичпа 22 çула яхăн măйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тимлеççĕ. Фадеевсем малтанах халăхран сĕт пухассипе тăрăшнă. Хăшĕсем ял хуçалăх отраслĕнче ĕçлени тупăшлă мар теççĕ. Паллах, ĕç хастарĕсем çак шухăшпа пачах килĕшмеççĕ. Тĕрĕс утăмсем туни яллă тăрăхра та бизнеса аталантарма май панине çирĕплетеççĕ. Фадеевсен çемйи пуçаруллă та тăрăшуллă, хресчен-фермер хуçалăхне йĕркелесе янă. Патшалăх программисене пурнăçлама пĕрре мар хутшăннă, грантсем çĕнсе илнĕ. Инвестици хывни хуçалăха тĕреклетме пулăшать.

2012 çулта Алексей Фадеев фермер пĕрремĕш миллиона тивĕçнĕ. Ĕнесем туянса 25 пуç выльăх вырнаçмалăх вите çĕкленĕ. Хастар та мал ĕмĕтлĕ Алексей Фадеевăн хуçалăхĕ çемье фермине çĕклеме тăватă çул каялла 10 миллион тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ.

– Тăрăшакана патшалăх та пулăшать. 100 пуç ĕне вырнаçмалăх ферма çĕклеме пултартăмăр. Паллах, хамăр нухрата та, кредит ресурсĕсене те явăçтартăмăр. 2019 çулта ферма уçнă чухне сăвакан ĕнесем 47 пуç пулнă тăк, халĕ вĕсен йышне 83 пуçа çитертĕмĕр. Măйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх вара пĕтĕмпе 197 пуç, – пĕлтерчĕç Алексей Николаевичпа Елена Николаевна.

Çĕкленсе ларнă çĕнĕ ферма куçа илĕртет. Вăл кермен пекех. Фермер каланă тăрăх, хăшĕсем кунта камсем тĕпленнĕ-ши тесе хытах кăсăкланаççĕ иккен. Фадеевсен фермине тата хăватлă выльăх-чĕрлĕх комплексĕпе те танлаштараççĕ. Кунта йăлт пур – вентиляци, сĕт сивĕтмелли оборудовани, сĕт пăрăхĕ, ĕç çыннисем валли кану тата душ пӳлĕмĕсем, ĕнесене пĕтĕлентермелли вырăн.

Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен тени Фадеевсемшĕн пурнăç девизĕ пулса тăнă. Ĕнесен продуктивлăхне ӳстерес тесе ăратлăха лайăхлатассипе ĕçлекен хуçалăхсемпе çыхăну тытма тăрăшаççĕ. Акă, Алексей Николаевич темиçе çул каялла «Чувашское» обществăн тĕп зоотехникĕпе Киров облаçĕнчи Белохуницы районĕнчи «Суворовское» обществăна çитсе курнă, мал опытпа паллашнă. Районти тухăçлă ĕçлекен предприятисем те тĕслĕх вырăнĕнче.

Кăçалхи пилĕк уйăхра фермер хуçалăхĕнче 219, 8 тонна сĕт туса илнĕ, пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 15,3 процент пысăкрах. Вăтам сăвăм 2747 килогрампа танлашнă. Ку кăтартупа Алексей Фадеев фермер хуçалăхĕ хальлĕхе районта иккĕмĕш вырăнта. Пĕр вăхăт Фадеевсем сурăх ĕрчетессипе те тимленĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тесен апат базине çирĕп кирлĕ. Фермер хуçалăхĕнче нумай çул ӳсекен курăксем 170 гектар йышăнаççĕ. Хуçалăхра утçи пуçланнă ĕнтĕ.

**Елена ПОРФИРЬЕВА.**

## Малтисен йышĕнче



**Чăваш ен микробизнес пĕчĕк бизнеса, пĕчĕк бизнес вăтаммине куçнипе лидер-регионсен йышне кĕнĕ.**

Чи курăмлă ӳсĕм ресторан бизнесĕнче, апат-çимĕçпе тивĕçтерессинче, строительствăра, специализациленен курттăмăн тата ваккăн суту-илӳре.

Хăшпĕр регионсенче уйрăмах пысăк куçăм тунă – тӳрех вăтам бизнес ушкăнне «куçнă» – микропредприятисем те пур. Ку кăтартупа та Чăваш Республики малтисен шутĕнче. Пуринчен ытла ку компанисем строительство, обществăлла апатлану тата грузсене автотранспортпа турттарас сферăсенче. Çавăн пекех лидерсем хушшинче – улма-çырлапа тата пахчаçимĕçпе, компьютер хатĕрĕсемпе курттăмăн суту-илӳ тăвасси, строительство ĕçĕсем тата тырпул ӳстересси.

Бизнес пĕр категоринчен теприне куçнипе пĕлтĕр Чăваш енĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ те пулнă. Республикăра чи ӳсĕмлĕ 3 отрасль шутне компьютерăн программа тивĕçтерĕвне хатĕрлесси те кĕнĕ.

## Социаллă контракт пулăшнипе

**Кăçал Раççейре 108 пин социаллă контракт çырнă, Чăваш енре – 635. Предпринимательсен 25 проценчĕ бизнеса илемпе сывлăх сферинче уçать.**

«Популярлăхĕпе» иккĕмĕшĕ – производство сфери, тĕрĕсрех – урамри тата сад сĕтелпуканĕ, вĕллесем тата ытти те. Виççĕмĕшĕ – ял хуçалăхĕ, тăваттăмĕшĕ – юсав (çав шутра – тумтир, атă-пушмак юсавĕ), пиллĕкмĕшĕ – логистика (пассажирсене турттарасси).

Соцконтракт йĕркипе предпринимательлĕхе суйлакансенчен çуррийĕ каярахпа уйрăм предпринимательсем пек регистрациленеççĕ, ыттисем харпăр хăй çине ĕçлеме тытăнаççĕ.

– Чăваш енре социаллă хӳтлĕх органĕсемпе «Мой бизнес» центр хушшинче тачă çыхăну йĕркеленĕ. Социаллă контракт çырас текенсене центр предпринимательство пĕлĕвне илме пулăшать, финанс планне йĕркелес тата клиентсене явăçтарас ыйтусемпе, бизнес-план хатĕрлессипе консультацисем парать, – ăнлантарать центр ертӳçи Татьяна Макаркина.

«Социаллă контракт» программăпа чылай нумайрах укçа пама тытăнĕç.

Сахал тупăшлă çынсене çак программа пурнăçри йывăрлăхсене чăтса ирттерме, ĕçлесе илмелли урăх майсем тупма пулăшать.

Кăçал республикăри 1 пине яхăн ĕçсĕр çын çĕнĕ профессие алла илнĕ, ĕçлеме тытăннă.

Ялта хушма хуçалăха аталантаракансем «социаллă контракт» пулăшăвĕпе 100 пин тенке, харпăр хăйĕн услам ĕçне пуçаракансем вара 250 пин тенке тивĕçеççĕ.

Инфляци витĕм кӳнине тата таварсем хакланнине кура çитес уйăхра «социаллă контракт» пулăшăвĕн виçи ӳсет. Ял тăрăхĕнче хушма хуçалăха аталантаракансем 100 пин вырăнне 200 пин тенкĕ илĕç, услам ĕçне пуçаракан предпринимательсем вара 250 пин мар, 350 пин тенке тивĕçĕç. Социаллă контракт йĕркипе районта пурăнакансем те усă кураççĕ. Пĕлтĕр килĕшӳве 66, кăçал 39 çынпа çырнă.